# ÇЫРĂНАКАНСЕНЕ ТАЙМАПУÇ!

Хаклă вулакансем!

«Суварăн» çĕнĕ çулти тиражĕ пирки хурланмасăрах пĕлтеретĕп. Пĕтĕмпе пирĕн хаçат халĕ 5411 экземпляр тухать. Пуринчен нумайрах çĕпрелсем çырăннă — 1192 экземпляр. Анчах та районти чăвашсем малтанхинчен сахалтарах çырăнса илнĕ (унччен 1341 экземпляр пулнă). Уйрăмах «Сувара» пăвасем ытларах юратаççĕ. Районта чăвашсем сахалтарах пулсан та вĕсем 1072 хаçат çырăннă — малтанхинчен 50 экземпляр ытларах. Чыс вĕсене! Теччĕсем те тиража ÿстернĕ — 51 экземпляр хутшăннă, 410 çитнĕ. Аксусем чылай чакарнă. Ĕлĕкрех вĕсем пин ытла та çырăннă, халĕ 828 çеç...

Ăмăрту кăтартăвĕсене çитес номерте пĕтĕмлететпĕр.

Александр ИВАНОВ,
тĕп редактор.


*Чăваш пулар, пĕрле утар!*

# Сувар

1№
(471)
вырсарникун
кăрлач
уйăхĕн
(январĕн)
5-мĕшĕ,
2003 çул

Республиканская общественно-политическая чувашская газета
Тутарстан Республикинчи чăвашсен обществăпа политика хаçачĕ




## ÇУЛТАЛĂК ПĔТĔМЛЕТĔВĔСЕМ

2002 çул вĕçленес умĕн ТР Президенчĕ Минтимер Шаймиев республика аталанăвĕн пĕтĕмлетĕвĕсене палăртрĕ. Чи малтанах вăл газификаци çинчен каларĕ. Халĕ Тутарстан кашни ял-хуланах газ кĕртнĕ Раççейри пĕртен-пĕр регион шутланать. Кама юханшывĕ урлă 14,5 километр тăршшĕ кĕпер уçнă, Анат Камăри нефть тирпейлекен заводăн тĕп комплексĕ ĕçлеме пуçлани республика экономикишĕн пысăк пулăшу.

Пĕтĕмĕшле илсен 2002 çулта Тутарстанра 1,5 миллион тăваткал метр кил-çурт хута янă.

«Тырпул туса илесси енчен иртнĕ çул пирĕн республикăшăн тухăçлă пулчĕ», — терĕ Минтимер Шарипович. — Пĕтĕмĕшле республикăри ял хуçалăх предприятийĕсем 5,6 миллион тонна тырпул пухса кĕртрĕç. Тырпул тухăçлăхĕ гектартан вăтамран 35 центнера яхăн тухрĕ. Республикăра пурăнакансен ĕç укçи иртнĕ çулта вăтамран 10,7 процент, пенси 11,6 процент ÿсрĕ. «Çулталăк вĕçленнĕ тĕле вăтам ĕç укçи шайĕ Тутарстанра 4 пин тенке çитме пултарчĕ», — терĕ Президент.

## ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!

Çĕнĕ çул. Кашни çын унран çĕнĕ телей, савăнăç кĕтет. Мĕнпур иккĕленÿсене, хурланусене кивĕ çулра хăварса 2003 çула ырă шухăшсем, ĕмĕтсем çеç илсе каçар. Мĕнпур ентешĕмсене çирĕп сывлăх, çемьере телей, ăнланулăх сунатăп. Ачасем ăслă та çирĕп ÿсчĕр, çамрăксем хастар аталанччăр, ватăсем сывлăхлă пулса яшсемшĕн тĕрек пулччăр.

Порфирий АФАНАСЬЕВ.

## ЮРАТĂР ТĔНЧЕНЕ

*Валерий Яковлева*

Куç умĕнче те çын чун-чĕринче
Нихçан никам ăнланайми тĕнче,
Самант пире телей илсе килет те,
Самант çав телеех туртса илет.
Кулатпăр-и куççулĕ тухиччен,
Йĕретпĕр-и куççулĕ юлмиччен,
Турри пире темле шăпа пÿрсен те,
Вăл пана ĕмĕт пит кĕске иккен!
Тавах кун-çулăма, тавах, тавах,
Тем-тем курса ăнлантăм эп хамах —
Тĕнче хитре. Çак тĕнчене юратăр,
Ыр çынсене юратăр уйрăмах.
Тĕнче хитре хĕвел кулса тăрсан,
Тĕнче хитре чун канăçлă пулсан.
Чăвашăмсем, пĕрне-пĕри каçарăр,
Пĕрне-пĕри ыр сунăр кăмăлтан.
Çак ĕмĕр тăрăх утăр юрăпа,
Тус-тантăшпа та савнă мăшăрпа,
Пĕрне-пĕри вăй парăр, вут хыптарăр
Юратупа та ăшă сăмахпа.
Тавах, тăванăмсем, тавах сире,
Эсир — кашни пĕри — ман чĕрере.
Шăп сирĕнпе пулма Турри çырнишĕн
Телейлĕ тетĕп хамăн ĕмĕре.

### КĔСКЕН

### ЧИ ЛАЙĂХ СТУДЕНТСЕНЕ

Тутарстан Президенчĕ Минтимер Шаймиев Çĕнĕ çул умĕн Хусан Кремлĕнче ТР патшалăх стипендисен лауреачĕсене, иртнĕ çулта палăрнисене, йышăннă. Унта 20 аспирант, 30 студент тата професси енĕпе пĕлÿ паракан вăтам училищĕсенче 10 вĕренекен пулнă. Пухăннисем ăшшăн калаçнă, республикăри вĕренÿ политикине тĕплĕн пăхса тухнă.

Минтимер Шаймиев Президент юлашкинчен хăйĕн указне вуласа пачĕ. Унпа килĕшÿллĕ кашни çул 20 çамрăк ăсчах валли грант тума тата 12 преми пама йышăннă.

### ИНТЕРНАТ ÇУРЧĔ

Çĕнĕ çул умĕн Пуян Сабари вăрман хуçалăх поселокĕнче ваттисемпе инвалидсем валли интернат çурчĕ уçăлчĕ. Унта 107 çын вырнаçать. Кунта пурăнма питĕ лайăх условисем туса панă. ТР Президенчĕ М.Шаймиев районта пулнă май çак çурта та çитсе курчĕ, «Килти кинотеатр» видеокомплекс парнелерĕ. Вăл çавăн пекех çак çурта тунă строительсене чысланă çĕре хутшăнчĕ.



# ВУНТĂХХĂРМĔШ ĔМĔРТЕН ÇИРĔМ ПĔРМĔШНЕ



Декабрĕн 25-мĕшĕ Хусан историне савăнăçлă пулăмпа кĕрсе юлчĕ. Кивелсе юрăхсăра тухнă килçуртсене пĕтерессипе ТР Президенчĕн программипе 25 пинмĕш çемьене çĕнĕ хваттере пурăнма куçма ордер пачĕç.

Кам-ха вăл, çак пысăк телей пÿрнĕ çын? Вăл пуçлăх та, обществăлла пĕрлешĕвĕн ертÿçи те мар. Ахаль çын — Татьяна Ивановна Аппарова. Халиччен вăл Нахимов çырми урамĕнчи 13-мĕш çуртра пурăннă. Кунта пÿлĕме ăшăтма вутă хатĕрленĕ, шывшăн урама çÿренĕ, туалечĕ те урамрах пулнă. Тахçан авал туса лартнă йывăç çурт шултăрканă, мĕн чуль вутă çунтарсан та ăшă тытман. Татьяна Ивановна çак çуртра 1956 çулта çуралнă, ывăлĕ Роман та кунтах çут тĕнчене килнĕ.

— Пирĕн çурта киввисен шутне 1982 çулта кĕртрĕç. Анчах çĕннине парса савăнтарма васкамарĕç. Минтимер Шаймиевăн Президент программи ĕçе кĕрсен çеç чунра шанчăк çуралчĕ. Кăçал пирĕн урамри çуртсенче пурăнакансене хăтлă хваттерсем пама пуçларĕç. Пирĕн çуртра 2-3 çемье çеç тăрса юлчĕ. Çул вĕçленет, пире Романпа иксĕмĕре çаплах черет çитмест. Çак çуртра тата тепĕр çул пурăнмалла-шим тесе хуйха та ÿкнĕччĕ, — каласа парать Аппарова. — Декабрĕн 24-мĕшĕнче ордер корешокне пачĕç те ывăлăмпа пĕр тăхтами çĕнĕ хваттере куçрăмăр, пурнăç ăнтăр тесе унта тÿрех хамăрăн икĕ кушака, Пуçапа Муçана кĕртсе ятăмăр. Пĕр сăмахпа, тем пысăкăш телей йăтăнса анчĕ пирĕн çине. Строительсем те пысăк парне турĕç. «Волжскдомстрой» предприятийĕ сĕтел-пукан гарнитурĕ, люстрăсем, Рустам Минниханов Тутарстан правительстви ячĕпе тĕрлĕ тĕспе кăтартакан телевизор парнелерĕç. Пурне те тем пекех пысăк тав.

Аппаровсене ордер пама Рустам Минниханов премьер, Хусан мэрĕ Камиль Исхаков, ытти пысăк пуçлăхсем те пычĕç, çĕнĕ хваттер хуçисене шампански бокалĕсем йăтса саламларĕç.

— Президент программипе кăçал республикăра 6 пин çемье кивелнĕ çуртсенчен хăтлисене куçрĕ, — пĕлтерчĕ пухăннисене Тутарстан премьерĕ. — Çак шутран 3511 çемье — хусансем. Программа тата икĕ çул ĕçлет. Çак тапхăрта япăх çуртсенче пурăнакансене хăтлисемпе тивĕçтерме тăрăшатпăр. Кивелнĕ çуртсене пĕтерес ĕçе «Татнефть», «Татэнерго», «Нижнекамскнефтехим» тата çĕршер организацисемпе предприятисем пысăк тÿпе кĕртеççĕ. Икĕ çултан çĕнелнĕ программа, ипотека, хута каять. Вăл çамрăк çемьесене хваттерлĕ тума тивĕçлĕ. Паллах, кунта пĕчĕк процентлă кредит йĕрки никĕсре тăрĕ.

Хăнасем саланас умĕн Татьяна Ивановна Аппарова тата тепĕр хут пурне те тав турĕ.

— Эпир хамăра вунтăххăрмĕш ĕмĕртен тÿрех çирĕм пĕрмĕшне куçнă пек туятпăр. Кун пек пысăк парнешĕн çĕре çитиччен пуç таятпăр.

Виталий ЕЛТОВ.

**Автор тата Фарит МУРАТОВ сăнÿкерчĕкĕсенче: телейлĕ çемьене саламлană самант; Т.Аппарова Роман ывăлĕпе Çĕнĕ çул елкине те лартма ĕлкĕрнĕ.**